Аслӑ Ҫӗнтерӳ 70 ҫул тултариччен – 9 кун

# ХРЕСЧЕН САССИ

32 (2545) [1]
Хакӗ ирӗклӗ

2015
апрель ака 30
КӖҪНЕРНИКУН

1991 ҫулхи апрелӗн 21-мӗшӗнче тухма тытӑннӑ



ЯЛЙЫШ КИЛ ХӲТЛӖХ СЫВЛӐХ ТӖПЕЛ

**ПАЯН кун тӑршшӗ 15 сехет те 19 минут.**

**Зосим кунӗ. Зосим утарҫӑсене хӳтӗлекен шутланать, ҫавӑнпа вӗллесене утара кӑларса лартнӑ. Чи малтан ҫеҫке ҫуракан чечексен уҫланкине илсе тухнӑ. Хурт мӗнле чечек ҫине ларать, ҫавӑн ҫимӗҫӗ ӑнса пулать тенӗ. Хӑш тырӑ патне вӗҫет, вӑл та тухӑҫ парать. Хурт чие ҫырлин чечекӗ ҫине ларсан чие ӑнса пулать, лармасан – ӑнӑҫмасть. Ҫак куна сӑнаса хуратул тухӑҫӗ мӗнле пуласса хаклanӑ. Вӗллери хуртсем хӗл каҫипе аван упраннӑ пулсан – тухӑҫ кӗт, йыша ҫухатнӑ пулсан хуратул тухӑҫ памасть тенӗ.**

**ЫРАН – Куҫма кунӗ. Хресченсем кишӗрпе хӗрлӗ кӑшман акма сӗннӗ. Ҫирӗк ҫеҫкене ларсан хуратул акма вӑхӑт. Фиалка, ҫӳҫе е йӑмра ҫеҫке кӑларни редис, кишӗр, укроп, петрушка акмаллине, сухан лартмаллине пӗлтернӗ. Акас-лартас умӗн ӗлӗкхи йӑлапа ир-ирех вӑрлӑх йӗпетмелли йывӑҫ савӑт патне тухнӑ. Ырӑ тухӑҫ пуҫтарса илессе шанса савӑт тӗпне пӑхӑр укҫа пӑрахнӑ. Теприсем вӑрлӑха кӳлӗ шывӗпе вирӗ ир хушши ислентернӗ. Ҫак ӗҫе ҫын курмалла мар вӑрттӑн тумалла пулнӑ, унсӑрӑн япӑх тухӑҫ пулать тенӗ.**

**ВИҪМИНЕ – Иван кунӗ. Килте тӗртнӗ пирсене уя илсе тухнӑ. Ҫутҫанталӑкран йӗтӗн, кантӑр, ыраш вӑйлӑ тухӑҫ патӑр тесе ыйтнӑ. Ҫак кун хресченсем усал-тӗселтен хӳтӗлеме ыйтса кӗлӗ тунӑ. Иван Салтак текен ҫеттуя халӑх питӗ ӗненнӗ. Тепӗр чухне пурлӑхне кам вӑрланине пӗлес шутпа унӑн турӑшӗ умӗнче пуҫ ҫапнӑ. Ҫакӑн хыҫҫӑн ултавҫӑсем, вӑрӑсем ҫиеле тухнӑ имӗш.**

## СӐНАВСЕМ

• Май уйӑхӗ сивӗ тӑрсан ҫулталӑк тӗштырӑпа савӑнтарать. • Май уйӑхӗнчи ҫумӑр тырӑшӑн сиплӗ. • Майри пӗрремӗш ҫумӑрпа пуҫа йӗпетнӗ, ҫӳҫ курӑк пек вӑйлӑ ӳсессе шаннӑ. • Майӑн 1-мӗшӗнче ҫуралнӑ ҫыннӑн пахчаҫӑ пулмалла тенӗ, унӑн пурнӑҫӗшӗн ҫул уҫӑласса ӗненнӗ. • Куҫма кунӗ ҫитсен нӳхрепе уҫса пӑхнӑ та алла кӗреҫе тытнӑ, ҫурт ҫумӗнчи ҫӗре чавма васканӑ. • Май уйӑхӗн пуҫламӑшӗ ӑшӑ тӑрсан вӗҫӗнче сивве кӗт.

## ЫТЛАШШИ ПУЛМӖ

### Таса сӗт

Ӗне сунӑ, сӗтне сӗрнӗ, флягӑна янӑ чухне шурӑ шӗвеке тӗрлӗ микроб лекет. Микробсем сывлӑшра та, япӑх ҫуса тасатнӑ савӑтра та, тин сунӑ сӗтӗн малтанхи виҫинче те пулма пултараҫҫӗ. Вӗсем питӗ хӑвӑрт аталанаҫҫӗ. Тӗслӗхрен, пӗр микробран 12 сехетре 16 миллион ытла ҫӗнни тухма пултарать. Кун пек чухне сӗт часах пӑсӑлать, ҫын сывлӑхӗшӗн хӑрушлӑх кӑларса тӑратать. Хӑш-пӗр микроб ерекен чирсене аталанма май парать. Сӗт таса пултӑр тесен ӗне сӑвиччен пӗр сехет маларах вылькӑх апачӗпе ӗҫлеме чарӑнмалла. Витене тӑтӑшах уҫӑлтармалла, килти вылькӑха тасалӑхра тытмалла. Сума ларичччен ӗне ҫиллине ӑшӑ шывпа ҫумалла, шӑлса типӗтмелле. Енчен те ҫилли ҫинче ҫӑм шӑтма тытӑннӑ пулсан ӑна касмалла. Сума тытӑниччен ӗне хӳрине ури ҫумне ҫыхмалла. Пирвайхи сӗт тумламӗсене уйрӑм савӑта суса илмелле. Суса пӗтерсен ӗне ҫиллине шӑлса типӗтмелле те пуҫӗсене ҫиелтен вазелинпа сӗрмелле.

### Айсарӑм кирлӗ-и?

Питех те кирлӗ. Вӑл вылькӑха шӑнса пӑсӑласран хӳтӗлет, ӑшӑтать. Кунсӑр пуҫне айсарӑм пур чухне витере типӗ те таса: торф, пӑчкӑ кӗрпи, йывӑҫ ҫулҫи, лӑсӑллӑ турат аван.

Айсарӑм хуриччен урайне лайӑх ҫӑваҫҫӗ те извеҫ (1 тӑваткал метра – 0,5 кг) сапаҫҫӗ.

Ҫулталӑкне ӗнене 700-900 кг айсарӑм кирлӗ, сурӑхпа качака валли – 75-80, сыснана – 550, кӑвакала – 12, кӑрккапа хура – 30, чӑхха 10-12 кг кирлӗ.

## ЫЙТУ-ХУРАВ

### Ҫӗр шапи ҫывӑрма памасан

**? Мана пӗр ыйту канӑҫ памасть. Тӗпсакайне кашни ҫулах кӗркунне ҫӗрулми упрама хуратӑп, ҫуркунне кӑларатӑп. Кӗркунне пӗр ҫӗр шапи те курмастӑп. Ҫуркунне ҫулсерен ҫур витрене яхӑн кӑларса тӑкатӑп. Тӗпсакайне уҫӑлтармалли шӑтӑксене тимӗр сеткӑпа хупланӑ. Ӑҫтан тухаҫҫӗ-ши ҫӗр шаписем? Тата вӗсене мӗнле майпа пӗтерме пулать? Ара, ҫуркунне юрланипе ҫывӑрма памаҫҫӗ-ҫке.**

**Петр ПРОКОПЬЕВ. Красноармейски районӗ.**

Тӗплӗ шухӑшласан шапасем пирӗншӗн туссем шутланаҫҫӗ. Мӗншӗн тесен вӗсем сиенлӗ кӑпшанкӑсене, йӗпе хуртсене пӗтерме пулӑшаҫҫӗ. Шапа шучӗ чылай пулсан, паллах, вӗсемпе кӗрешмелле. Чи малтанах тӗпсакайне тасатмалла, шывлӑ вырӑнсене типӗтмелле, тулли кӗленче савӑтсене урӑх вырӑна куҫармалла, мӗншӗн тесен шапа шыв еннелле туртӑнать. Тӗпсакайӗнчен 2 метрта вылькӑха апатламалли вырӑн пулмалла мар. Хӑшпӗр йышши шапана ҫакӑ та илӗртет. Шапасене пӗтермелли мел нумай. Эпир сире ҫын сывлӑхӗшӗн сиенсӗррипе усӑ курма сӗнесшӗн. Тӑвар, лимон кислоти тата кофеин унран хӳтӗленме пулӑшаҫҫӗ. Вӗсене ытларах хурса парсан шапасем хӑвӑрт кӳҫран ҫухалаҫҫӗ. Сахал чухне хӑратаҫҫӗ кӑна, урӑхла каласан, шапа чӗрӗ юлать.

Тӗпсакай тӑршшӗпе тӑвар сапса тухӑр. Вӑл шапа урисене ҫунтарать, ҫавӑнпа тӗпсакайӗнчен хӑвӑрт тухса тарма тӑрӑшать. Тӑварпа ӑна тӗппипе пӗтерейместӗн.

Кофӗн йӑваш шӗвекӗ шапана хӑратма пултарать. Питӗ вӑйлӑ шӗвекпе сапсан унӑн чӗри тапма чарӑнать.

Лимон кислоти те ҫавнашкал витӗм кӳрет. Унӑн хӑватлӑ шӗвекӗпе шапа туххӑмрах вилет.

### Мӗн килӗшмерӗ-ши?

**? Пӗлтӗр ҫакна асӑрхарӑм: груша йывӑҫӗн хӑш-пӗр турачӗ ҫинче ҫулҫӑсем чӑрӑш йӗппи пек кӑна сарӑлчӗҫ. Ҫулла турачӗсемпе пӗрлех типме тытӑнчӗҫ. Мӗн килӗшмерӗ-ши?**

**Мария ПЕТРОВА, Пӑрачкав районӗ.**

Сирӗн йывӑҫ гербицидпа наркӑмӑшланнӑ. Тен, эсир хӑвӑр е сире пӗлтермесӗр пӗр-пӗр тӑванӑр йывӑҫ ҫумне гербицида ытлашшипех хунӑ. Ахӑртнех, ҫумкурӑкран хӑпас тесе. Ку ҫеҫ те мар. Улма-ҫырла йывӑҫӗ вӑйлӑ шӑнсан та ҫапла пулма пултарать. Кун пек чухне ҫуркунне тӑпрана азот удобренийӗ ытларах хумалла: йывӑҫа 100 г аммиак селитрипе апатлантармалла. Удобрение 10 литр шывра ирӗлтерсен аван. Ӳснӗ вӑхӑтра йывӑҫсене вӑйлӑ шӑвармалла.

## ВУЛАКАН СӖНЕТ

### Йӑвӑ лартса тухӑҫ илеймӗн

Чылай пахчаҫӑ шухӑшӗпе ҫӗрулмине йӑвӑ лартсан тухӑҫ ытларах пуҫтарса илетӗн. Анчах та шӑпах ӳсӗм тапхӑрӗнче (чечеке ларнӑ хыҫҫӑн) ҫӗрулми аври сарӑлать, ҫавна май йӑвӑ лартнӑ пахчаҫимӗҫе ҫутӑ ҫитмест, $CO_2$ текен япала ҫулҫӑ патне япӑх пырать, ҫӗнӗ ҫӗрулми йӑвашшӑн ӳсме тытӑнать. Ҫу тӑршшӗпе ҫанталӑк ӑнӑҫсӑр тӑнӑ чухне йӑвӑ лартнӑ ҫӗрулми уйрӑмах сахал тухӑҫ парать. Кунсӑр пуҫне фитофтора чирӗ хӑвӑрт вӑй илет.

Эпир ир пулакан ҫӗрулми йӑранӗ хушшине 65-70 см хӑваратпӑр, вӑтам тата кая юлса ҫитӗнекеннин хушши 80-85 сантиметрпа танлашать. Ҫапла туни ҫӗрулми ӳсӗмӗшӗн питех те меллӗ тӑрӑ ("гребень") йӗркелеме май парать. Йӑран хушши сарлака чухне ҫутӑ та, ҫӗрулмине кӑпкалатма вырӑн та ҫителӗклӗ. Аврисем пӗр-пӗринчен мӗнле хушӑра ларни те ҫутӑшӑн пӗлтерӗшлӗ. Эпир ир пулакан ҫӗрулми вӑрлӑхне 25 сантиметртан, каярах ҫитӗнекеннине 30-35 сантиметртан лартатпӑр. Ҫулсеренех пысӑк тухӑҫ пуҫтарса илетпӗр.

**Валентина НИКОЛАЕВА. Патӑрьел районӗ.**



**«Хресчен сасси» – ялйыш хаҫачӗ! Килсеренех янратӑр ячӗ!**

***Ҫур ҫуллӑх хак – 297 тенкӗ те 78 пус, ҫырӑнтару индексӗ – 54838.***

| ҪАНТАЛӐК | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|
| Шупашкарта | Вӑхӑт | 30.04 | 1.05 | 2.05 | 3.05 | 4.05 |
| Температура, $^0C$ | 2-4 сехетре | +11 | +12 | +12 | +11 | +10 |
| | 14-16 сехетре | +21 | +16 | +18 | +17 | +15 |
| Ҫумӑр ҫӑвать | | – | 🌧 | – | 🌧 | – |
| Атмосфера пусӑмӗ, мм. | | 751 | 753 | 748 | 745 | 746 |

**ҪЫРӐНТАРУ ХЫПАР 2015**

**«Хыпар» Издательство ҫурчӗ кӑларӑмӗсене 2015 ҫулӑн II ҫурринче илсе тӑмашкӑн Рассей почтин мӗнпур уйрӑмӗнче ҫырӑнтараҫҫӗ**




Ҫавӑн пекех пирӗн кӑларӑмсене «Чӑваш пичечӗ», «Советская Чувашия» киоскӗсенче тата редакцире ҫырӑнма пулать

РоссельхозБанк

Снижены ставки по кредитам для пенсионеров
Кредит «Пенсионный»



Телефоны в Чебоксарах: (8352) 66-22-06, 58-80-02

С 09.02.2015 действуют сниженные процентные ставки по кредиту «Пенсионный» на неотложные нужды для пенсионеров без обеспечения в рублях.
Подробности по телефону 8 800 200 02 90, на официальном сайте www.rshb.ru и в офисах ОАО «Россельхозбанк». Генеральная лицензия Банка России №3349 (бессрочная). Реклама.

Звонок по России бесплатный
8 800 200-02-90 | www.rshb.ru

ХӐТЛӖХ

## Пенсие – маларах

РФ Пенси фончӗн республикӑри уйрӑмӗ пӗлтернӗ тӑрӑх – уяв кунӗсенчи пенсисемпе тӑлевсене маларах параççӗ.

Май уйӑхӗн 3-7 мӗшӗсенчи пенсисене тӳлемешкӗн Перекет банкне РФ Пенси фончӗн республикӑри уйрӑмӗ укçана апрель уйӑхӗн 29-мӗшӗнче куçарнӑ. Ытти банка пенси тӳлевӗн укçине май уйӑхӗн 8-мӗшӗнче çитереççӗ. Кредит учреждениййӗсем ӑна лицевой счет çине куçарсанах пенсионерсем нухрата илме пултараççӗ.

Почта çыхӑнӑвӗн уйрӑмӗсем пенсие çак графикпа валеçеççӗ:

май уйӑхӗн 2-мӗшӗнче – май уйӑхӗн 3 тата 4-мӗшӗсемшӗн;

май уйӑхӗн 5-мӗшӗнче – май уйӑхӗн 5-мӗшӗшӗн;

май уйӑхӗн 6-мӗшӗнче – май уйӑхӗн 6 тата 7-мӗшӗсемшӗн;

май уйӑхӗн 7-мӗшӗнче – май уйӑхӗн 8 тата 9-мӗшӗсемшӗн;

май уйӑхӗн 8-мӗшӗнче – май уйӑхӗн 10 тата 11-мӗшӗсемшӗн;

май уйӑхӗн 12-мӗшӗнчен – яланхи графикпа.

**Валентина ИЛЬИНА.**

АЛ АЙӖНЧЕ

## Сельдерей

Çуркунне организм ывӑнни палӑрать. Ӑна ирттерме сельдерей шӗвекӗ пулӑшать: 1 стакан вӗрекен шыва 1-2 чей кашӑкӗ вӗтетнӗ сельдерей е унӑн вӗтетнӗ тымарне ямалла, 30 минут тытмалла, сӑрӑхтармалла. Апат умӗн çур сехет маларах ӗçмелле. Сиплев курсӗ – вунӑ кун.

Кун пек чухне сельдерей вӑрри те аван. 1 стакан вӗретнӗ шыва 1 чей кашӑкӗ сельдерей вӑрри ямалла, 5 сехет тытмалла, сӑрӑхтармалла. Кунне виçӗ хутчен апат умӗн 20 минут маларах пӗрер апат кашӑкӗ ӗçмелле. Сиплев курсӗ – вунӑ кун.

Терка витӗр кӑларнӑ ыхрана, сельдерейӗн вӗтетнӗ тымарне пӗр пек виçепе илмелле, хутӑштармалла, пыл хушмалла, пӑтратмалла. Хутӑша кӗленче савӑтра холодильникра упрамалла. Кунне виçӗ хутчен апат вӑхӑтӗнче пӗрер апат кашӑкӗ çимелле.

## Усӑллӑ çусем

• Розмарин çӑвӗ вӑй хушать, лӑплантарать. Унсӑр пуçне юн пусӑмне шайлаштарать.

• Пихта çӑвӗ иммунитета ӳстерет, шыçса тата ӳт тӑртаннине ирттерет, артрозран пулӑшать.

• Сандал (Кӑнтӑрти йывӑç) çӑвӗ ӳпкене тасатнисӗр пуçне ар хӑватне ӳстерет. Çавӑн пекех вӑл микробсене вӗлерекен лайӑх эмел те. Темиçе тумлам çӑва ятарлӑ савӑта ярса çурта çутма тата çав шӑрша сывлама сӗнеççӗ.

*Асӑрхаттарни: халӑх сӗнекен сывату меслечӗсемпе усӑ куриччен тухтӑрпа канашласа пӑхмалла.*

СӖНӲ-КАНАШ

**НЕФРИТ ЧИРӖНЧЕН:**

✓ типӗтнӗ розмарин çулçине 1 чей кашӑкӗ илмелле, 350 г шыва ямалла, 150 г кагор хушмалла. Пӗр талӑк тытнӑ хыççӑн çулӑм çинче 5 минут вӗретмелле, савӑта хупласа 20 минут тытмалла. Сивӗтнӗ хыççӑн сӑрӑхтармалла, апат умӗн тата хыççӑн икшер апат кашӑкӗ ӗçмелле. Шӗвеке холодильникра упрамалла;

✓ 1 л хӗрлӗ эрехе 100 г вӗтетнӗ физалис çырлине ямалла, тӗттӗм вырӑнта 20 кун тытмалла, вӑхӑтран вӑхӑта силлемелле. Кунне виçӗ хутчен апат умӗн 50-шар г пӗр эрне ӗçмелле. Хӗлле валли физалисран повидло хатӗрлӗр: 400 г шыва 400 г çырла ямалла, 1 сехет вӗретмелле, сӑрӑхтармалла, 800 г пыл хушмалла, 30 минут вӗретмелле. Апат умӗн икшер апат кашӑкӗ çимелле, холодильникра упрамалла;

✓ шывпа сӗте 500-шер мл илмелле, петрушкӑн икӗ тачка тымарне вӗтетсе ямалла, çулӑм çинче вӗретмелле, сивӗтмелле. Кунне виçӗ хутчен çуршар стакан ӗçмелле. Сиплев курсӗ – 30 кун. Ун хыççӑн 1 уйӑх канмалла.

ЫЙТРӐР – ХУРАВЛАТПӐР

## Алӑ çуркалансан

? **Çуркунне час-часах алӑ çуркаланать. Мӗнпе çыхӑннӑ-ши çакӑ? Кун пек чухне мӗнле кремпа усӑ курмалла?**

**Галина ЛАНДЫШЕВА. Етӗрне районӗ, Йӳçпан ялӗ.**

Ӳт-тир вӑйлӑ типнӗрен алӑ çуркаланма тытӑнать. Çакна çанталӑкпа та сӑлтавлама пулать. Хӗвел, çил ӳт-тире типӗтет. Ытларах вара сивӗ çанталӑк япӑх витӗм кӳрет.

Сывлӑшри нӳрӗке, температура хӑвӑрт улшӑннине ӳт-тир лайӑх туять. Хытӑ шыв та алла çуркаланма пулӑшать. Çавӑн пекех ӑна супӑньпе вӗри шывра тӑтӑш çуни те.

Кӗпе-йӗм, савӑт-сапа çумалли хатӗрсемпе, цементпа, обой клейӗпе, сӑрӑпа, лакпа, тӑпрапа, кӗлпе ӗçленӗрен те алӑ çуркаланать. Кун пек чухне резина перчетке тӑхӑнмалла. Хӗллехи вӑхӑтра – ӑшӑ перчетке.

Паллах, алӑ çуркаланасси организмри улшӑнуран та килет: сахӑр диабечӗ, щит евӗрлӗ пар чирӗ аптратсан. Организмри япала ылмашӑвӗ е вар-хырӑм чирӗ чухне тӗрлӗ витаминпа минерал тата микроэлементсем çитмеççӗ. Çакӑ ытларах А, В тата Е витаминсем сахал чухне палӑрать. Ӳт-тир чирӗпе чирлесен те алӑ çуркаланать.

Алӑ кушӑрхарӗ е çуркаланчӗ пулсан сире кремсем пулӑшӗç. Сӑмахран, килçурта тирпейленӗ хыççӑн силикон кремӗпе усӑ курсан аван. Çанталӑк сивӗ чухне ӳтире хӳтӗлекеннине сӗрмелле. Кун пек чухне халӑх сиплевӗпе те усӑ курма пулать: 2 апат кашӑкӗ глицерин, 2 апат кашӑкӗ шыв, 1 апат кашӑкӗ пыл илмелле, хутӑштармалла, кӑштах çӑнӑх хушмалла. Хатӗр хутӑша алла сӗрмелле, 20 минут тытмалла. Енчен те глицерин çук пулсан пылпа хатӗрленӗ пашалу пулӑшать. Пылпа çӑнӑха пӗр пек виçепе илмелле, ӳсен-тӑран çӑвӗ е вылӑх çӑвӗ хушмалла. Хутӑша каçхине выртас умӗн алла сӗрмелле, бинтпа чӗркемелле е пир перчетке тӑхӑнмалла.

Çавӑн пекех алӑ кушӑрхасан ӳсен-тӑран (тасатманни), олива, сырлан, касторка çӑвӗсем пулӑшаççӗ. Вӗсене каçхине алла сӗрмелле, пир перчетке тӑхӑнмалла. Алӑ çуркаланнӑ чухне А, Е витаминсемпе хатӗрленӗ çу хутӑшӗпе усӑ курмалла.

КИРЛӖ ПУЛӖ

## Ӑс-тӑна çирӗплетме

Асӑрханӑ-тӑр экзамен е йывӑр кун хыççӑн пуç ӗçлемест. Шухӑш серепине йӗркелеме çак хӑнӑхтарусем пулӑшаççӗ. Ӑс-тӑна çирӗплетес тесе пӳрне вӗçӗсемпе куç хупанкине массаж тумалла. Енчен те питӗ хӑвӑрт, кӗске хушӑрах мӗн те пулин асаилмелле тӗк сире пуçа (çамкаран пуçласа ӗнсе хыçнелле) массаж тума сӗнетпӗр. Сӑмсана пӳрне вӗçӗпе сӑтӑрни тимлӗхе ӳстерет. Кашни хӑнӑхтарӑва 16 хутчен тумалла, унтан икӗ хӑлхана та алӑпа питӗ хытӑ хуплӑр та тепӗр темиçе минутранах каялла ярӑр. Çапла темиçе хут тӑвӑр.

Çак сӗнӳсем аслӑ çулсенчи ачасене экзамен тытнӑ вӑхӑтра, çитӗннисене ӗçленӗ чух пулӑшасса шанас килет.

СИППЕ КАЙТӐР

**АНГИНӐРАН:**

вӑтам кӑшмана çумалла, хуппинчен тасатмалла, терка витӗр кӑлармалла. Хутӑша стакана тултармалла, 1 апат кашӑкӗ уксус (9 процентлӗ) хушмалла, пӑтратмалла, тӗттӗм вырӑнта 4 сехет тытмалла, марля витӗр сӑрӑхтармалла. Кашни 2,5 сехетрен пыра чӳхемелле. Çапла тусан чир хӑвӑрт иртет.

РЕКЛАМА, ПӖЛТЕРӲСЕМ

*СУТАТӐП / ПРОДАЮ*

**2. АКЦИЯ! БЛОКИ КЕРАМЗИТОБЕТОННЫЕ** 20х20х40 – 33 руб., 12х20х40 – 28 руб., 9х20х40 – 24 руб. Высокое кач-во. Доставка манипулятором. Т. 8-960-307-31-51.

**3. АКЦИЯ! ПЕСОК, ГРАВМАССУ,** щебень, керамзит. По низким ценам. Доставка. Т. 8-960-307-31-51.

**5. Блоки керамзитобетонные** 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40 пропаренные, гидро-вибропрессованные заводские от производителя – недорого; **цемент, песок.** Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, документы. Т. 8-960-301-63-74.

**4. Немецкие пластиковые ОКНА.** Низкие цены. Пенсионерам скидки. Замер. Доставка – бесплатно. **Без выходных. Т. 8-987-576-65-62.**

**6. ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Т.: 8-927-844-15-01, 674642.

**8. Гравмассу,** песок, **щебень,** торф, кирп. бой, **керамблок, керамзит.** Пенсионерам, уч. ВОВ – скидки. Т. 8-905-199-01-22.

**11. Срубы для бани.** Доставка по ЧР. Т. 37-28-74.

**17. Песок, гравмассу, керамзит,** чернозем, **навоз.** Доставка. Т. 8-905-197-40-19.

**19. КИРПИЧ** красный, силикатный, **гравмассу,** щебень, **керамзит,** песок, кольца, **к/б блоки.** Т. 8-927-862-91-66.

**21. Керамблок, гравмассу.** Т.: 486307, 89176757528.

**22. Немецкие ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Пенсионерам скидки. Замер, доставка – бесплатно. Без вых. **Т. 8-927-855-83-55.**

**23. Гравмассу,** песок, бой кирпича, **щебень.** Доставка. Т. 89061355241.

**24. Грабли,** косилки, **сажалки,** копалки, **окучники, опрыскиватели.** Доставка. Т. 89278533596.

**30. Гравмассу, песок, щебень, керамзит.** Д-ка. Т. 89053465671.

**31. Гравмассу, песок, керамзит,** кирп. бой. Д-ка. Т. 89033225766.

**33. Кирпич** рядовой, лицевой; **керамблоки, кольца.** Доставка. Т.: 89063804835, 89276674605.

**35.** Пластиковые **ОКНА,** металлические **ДВЕРИ.** Бесплатно: замер, доставка, демонтаж. **Гарантия** 15 лет. **Рассрочка.** Скидки. Т. 8-937-391-39-91.

**37.** Ворота, калитки, заборы, навесы, **ТЕПЛИЦЫ. Кровля,** обшивка сайдингом. Общестроительные и сварочные работы. Замер. Д-ка. Установка. Гарантия. **Пенсионерам – скидки.** Т.: 89022881447, 387574, metalservis21.ru

## СĔТЕЛĔР ТУЛĂХ ПУЛТĂР

### Винегрет – çĕнĕ мелпе

*Кирлĕ пулать: 200 г çĕрулми, 50 г кишĕр, 30 г симĕс пăрса, 2 çăмарта (шурри), 20 г фасоль, 60 г пĕçернĕ аш. Соус валли: 2 çăмарта (сарри), 6 г горчица, 30 г ӳсен-тăран çăвĕ, 20 мл уксус (3 процентли) е лимон сĕткенĕ, тăвар.*

Çĕрулмине, кишĕре, фасоле, çăмартана пĕçермелле. Çăмарта шуррине, ытти пахчаçимĕçе тăваткал тураса савăта ямалла. Унтан – симĕс пăрса. Аша вĕттĕн турамалла, винегрета хушмалла, çиелтен – соус. Винегрета пăтратса 15 минута лартмалла. Тутă кĕмелĕх тăвар, лимон сĕткенĕ ямалла.

*Соус: пĕçернĕ çăмарта саррине горчицăпа, ӳсен-тăран çăвĕпе хутăштармалла, лимон сĕткенĕ е уксус хушмалла.*

### Пăшăхланă пĕвер

*4-5 порци валли: 500 г чăх е ĕне вылькăх пĕверĕ, 600-700 г çĕрулми, 1 пуç сухан, 1 кишĕр, çупкăм укроп, 1 пылак пăрăç, 1 стакан томат пасти, 2 лавр çулçи, ӳсен-тăран çăвĕ, авăртнă хура пăрăç, 1-2 кашăк калемпĕр, тăвар.*

1. Кишĕре теркăламалла, пылак пăрăçа улăм пĕрчи пек турамалла, çĕрулмине – тăваткал, сухана – çурма çавракан.

2. Вăйсăр çулăм çинче сухана саралса хĕреличчен ăшаламалла. Унтан кишĕр ярса çемçеличчен пăшăхламалла (вăтамран 1 минут). Пĕвер ямалла, пăтрата-пăтрата 2-3 минут ăшаламалла, çиелтен тăвар, калемпĕр сапмалла.

3. Пăрăç ярса хутăштармалла, çулăм çинче 1-2 минут тытмалла.

4. Çĕрулми, томат пасти, вĕри шыв хушмалла, пăтратмалла. Кирлех пулсан тăвар та яма юрать. Савăта хупласа çĕрулми пиçиччен пăшăхламалла. Лавр çулçи хушса çулăм çинче тата 1 минут тытмалла.

5. Хатĕр апата вĕтетнĕ укроп сапмалла.

### «Кăнтăр» салат

*6 порцине: 300 г ĕне вылăх ашĕ е чăх пĕверĕ, 2 кишĕр, 1 панулми, 3 çăмарта, 2 шăл ыхра, майонез, тăвар, авăртнă хура пăрăç.*

1. Пĕвере çумалла, вĕттĕн турамалла. Ĕне ашĕ пулсан пĕçерес умĕн 30 минут сĕтре тытмалла.

2. Кишĕре, çăмартана пĕçермелле, панулмие хуппинчен тасатмалла, тăваткал турамалла.

3. Ыхрана тасатмалла, теркăламалла.

4. Аша, çăмартана, панулмие, кишĕре хутăштармалла, тутă кĕмелĕх тăвар хушмалла.

5. Майонеза ыхрапа пăтратса салата ямалла. 2-3 сехет холодильника лартмалла.



## КИРЛĔ ПУЛĔ



### Панулми уксусĕ

Кашниех тĕпелте панулми уксусĕ тытать. Унпа апат-çимĕç хатĕрленĕ чухне ытларах усă кураççĕ. Кил-тĕрĕшре те унран пахи нимĕн те çук.

✓ Панулми уксусĕ çĕнĕ япалана çыпăçтарнă хак хутне уйăрма пулăшать: уксуса кăштах ăшăтмалла, çĕтĕке е губка йĕпетсе ун çине хумалла. Хут хăвăрт хайпăнать, йĕрĕ те юлмасть.

✓ Килти ырă мар шăршăран хăпма та панулми уксусĕпе усă кураççĕ. Холодильника, шкапа, апат-çимĕç контейнерне унпа сăтăрмалла. Ырă мар шăршă самантрах сирĕлĕ.

✓ Тутăхнă вак япалана (болт, пăта, шуруп тата ытти те) уксус хушнă шывра вĕретмелле. Кайран лайăх çумалла.

✓ Кăмран та лайăх тасатать: чейникри шыва панулми уксусĕ ярса вĕретмелле. Чейник çĕнĕ чухнехи пек çуталĕ.

✓ Тумтир тĕсне упрать: япала чӳхекен шыва панулми уксусĕ хушсан – вĕсем тĕссĕрленмĕç.

## ЮРАТНĂ ЮРĂ

**Ĕлĕхки юрăсене кăмăллатăп. Ара, эпир вĕсене юрласа ӳснĕ-çке. Халĕ çĕнĕ юрăсене çăмăллăнах тупма пулать, анчах ĕлĕкхисем курăнмаççĕ, вĕсене юрлакансем те сахалрах. «Мĕншĕн-ши эп сана пит юратрăм?» юррăн сăмахĕсене пичетлесе кăлараймăр-ши?**

**Елена ИВАНОВА.**
**Çĕрпӳ районĕ,**
**Çамрăксен поселокĕ.**

### Мĕншĕн-ши эп сана пит юратрăм?

1.Мĕншĕн-ши эп сана пит юратрăм,
Мĕншĕн лартăм санпа юнашар?
Мĕншĕн-ши çуллахи илемлĕ каçсенче
Ал парса уйрăлтăм эп санран?

2.Тĕлĕкре те сана çеç куратăп,
Калаçатăп санпа яланах.
Калаçаттăмăр та уйрăлаттăмăр,
Яланах пĕр-пĕрне ал парса.

3. Юрататăп сана юрататăп,
Халь те хатĕр сана юратма.
Анчах эсĕ мана манса кайрăн,
Иртсе кайрĕ пирĕн юрату.

4. Иртсе кайрĕ те урăх килмерĕç,
Çуллахи юратуллă каçсем.
Мĕншĕн-ши çав каçсем иртсе кайрĕç?
Çуллахи юратуллă каçсем.

*Асăрхаттарни: кашни куплетăн юлашки икĕ йĕркине икшер хут юрламалла.*

## ПĔЛНИ ПĂСМАСТЬ

### Ӳсен-тăран çăвĕ пăсăласран

Ӳсен-тăран çăвне нумай лартсан тути улшăнма пултарать. Лайăх мар тутă çапасран çу тĕпне (лĕкине) пуçтарса илмелле. 1 кг таса ӳсен-тăран çăвне пĕр фасоль пĕрчи вĕтетсе ямалла.

### Çи-пуçа шăтарсан

Тăхăнмалли япалана ăнсăртран шăтарсан кăларса пăрахма ан васкăр. Ăна саплама тумтир тĕслĕ пусма татăкĕ илмелле те çăмарта шуррипе сĕрмелле, шăтăк айне хумалла. Татăк хĕррине лайăх тикĕслемелле. Унтан тӳнтер енчен утюгпа якатмалла.

### Савăт вансан

Ваннă чашăк-тирĕкпе те кил-тĕрĕшре усă курма пулать: савăт-сапана мăлатукпа çапса вĕтетмелле, пӳлĕмри чечек чӳлмекне дренаж вырăнне хумалла.

### Тăварпа çăватпăр

Кĕпе-йĕм çумалли порошока перекетлеме тăварпа усă курмалла. Тумтир питех вараланман пулсан 1 литр сивĕ шыва 1 апат кашăкĕ тăвар ямалла. Лайăх ирĕлтернĕ хыççăн çи-пуçа, вырăн таврашне çĕр каçа ислетсе лартмалла. Ирхине чӳхесе типме çакмалла кăна. Тăвар пусмана тĕссĕрленесрен те упрать.

### Чашăк-тирĕке – хăйăрпа

Чашăк-тирĕке хими хутăшĕсĕр те тасатма пулать. Таса хăйăр илмелле, çатмара хĕртмелле. Çакăн хыççăн «дезинфекциленĕ» хăйăрпа чашăк-тирĕк çума усă курмалла. Укçа та тăкакланмĕ, экологи тĕлĕшпе те таса.

### Пахалăха лайăхлатма

Çарăк е кишĕр нумай выртсан пахалăхне çухатать, кăчăртатма пăрахать. Сивĕ шыва чĕрĕ çĕрулми касăкĕ ямалла. Çак шывра шаннă пахчаçимĕçе тытмалла.

### Тĕрĕс хатĕрлетпĕр

Пахчаçимĕçрен хатĕрленĕ салата 30 минут ытларах тытсан унăн пахалăхĕ, витаминĕсем çухалаççĕ. Çавăн пекех пахчаçимĕçе вĕттĕн турасан та, йӳçĕтнĕ купăстана шывра çусан та çимĕçре усăллă япаласем сахал юлаççĕ.

Пахчаçимĕçе эмаль савăтра е пăс çинче хатĕрлемелле. Ăна касмасăр, тасатса пĕçермелле. Теркăланă кишĕре ӳсен-тăран çăвĕпе çимелле. Капла организм А витамина лайăхрах йышăнать.

### Дивана çĕнетме

Диван кивелсен çăмăллăнах çĕнетме, «сăн» кĕртме пулать. Унăн тĕссĕрленнĕ пусмине çĕннипе улăштармалла. Пĕчĕк минтерсем çĕлесе хуни те дивана илемлетет.



## «КАПКĂН» КĔТЕСĔ



*– Эпĕ санран уйăх çине тарма та хатĕр.*

## ИЛЕМЛЕНЕР-И?

Кашниех илемлĕ куç тĕкĕ пирки ĕмĕтленет. Анчах вăл çуркунне енне час-часах сайраланать, кĕскелет. Илемлĕ те çăра курăнтăр тесен мĕн тумалла? Куç тĕкне çирĕплетме тата ситĕнме ӳсен-тăран çăвĕпе усă курмалла. Персик тата миндаль çăвĕпе сĕрсен куç тĕкĕ типмест. Касторка çăвĕ вара çирĕплетме, ситĕнме пулăшать, тăкăнасран сыхлать.

Куç тĕкне илемлетме ӳсен-тăран çăвĕнчен маска хатĕрлемелле. Ăна валли олива, пихта, касторка, сырлан, миндаль çăвĕсем каяççĕ. Пĕр чей кашăкĕ çăва темиçе тумлам А витамин ямалла. Хутăшпа эрнере 3-4 хут куç тĕкне сĕрмелле. Маскăна çывăрас умĕн тусан лайăхрах. Сĕрнĕ хыççăн ытлашшине куç çинчен салфеткăпа сăтăрса илмелле.

## ЧĂВАШ НАЦИ РАДИО ПРОГРАММИ (72,41 УКВ, 105 FM хумсем çинче)

**Тунтикун, майăн 4-мĕшĕ**

6.30-7.00 Шурăмпуç. (12+) 7.30-8.00 Наша Республика. Главная тема. (12+) 8.05-8.30, 11.05-11.30, 15.05-15.30, 16.05-16.30, 17.05-17.30, 18.05-18.30, 19.05-19.30, 20.05-20.30, 21.05-21.30, 23.05-23.30 Юрă вăчăри. (12+) 8.30-9.00 Мăшăр çунат. (12+) 9.05-10.00 Неформат. (12+) 6.05-6.30, 10.05-10.30, 22.05-22.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 10.30-11.00 Çĕр сум. (12+) 11.30-12.00 Ялтан яла. (12+) 12.05-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.05-15.00 Путешествие в историю чуваш. (12+) 15.30-16.00 Социальный вопрос. (12+) 16.30-17.00 Ялтан яла. (12+) 17.05-18.00 Мăшăру эп сан, ай, пулам-и? (12+) 18.30-19.00 Тăван ăс-хакăл. (12+) 19.30-20.00 Уйăхпи юмахĕсем. (6+) 20.30-21.00 Артистсем Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи çинчен вулаççĕ. (12+) 21.05-24.00 Каçхи микс. (12+)
**Çĕнĕ юрă** 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

**Ытларикун, майăн 5-мĕшĕ**

6.10-6.30, 7.10-8.00 Ирхи кăмăл. (12+) 6.30-7.00, 21.30-22.00 Республика сасси. (12+) 8.10-8.30, 9.10-9.30, 10.10-10.30, 16.10-16.30, 17.10-17.30, 18.10-18.30, 20.10-20.30, 21.10-21.30, 22.10-22.30, 23.10-23.30 Юрă вăчăри. (12+) 8.30-9.00 Ялтан яла. (12+) 9.30-10.00 Перекресток. (6+) 10.30-11.00 Социальный вопрос. (12+) 11.10-11.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 11.30-12.00, 22.30-23.00 Çемье ăшши. (12+) 12.05-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.10-15.00 Янра юрă. (12+) 15.30-16.00 Ачалăх урхамахĕ. (6+) 16.30-17.00, 23.30-24.00 Экстренный час. (16+) 17.30-18.00 Çĕр сум. (12+) 18.30-19.00 Тăван ăс-хакăл. (12+) 19.10-20.00 Асăмри юрăсем. (радиокараоке) (12+) 20.30-21.00 Артистсем Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи çинчен вулаççĕ. (12+)
**Çĕнĕ юрă** 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

**Ытларикун – шăматкун**

6.00, 7.00, 12.00, 13.00, 15.00, 18.00, 20.00, 22.00 - Хыпарсем. (12+)
8.00, 9.00, 11.00, 14.00, 16.00, 17.00, 19.00, 21.00, 23.00 - Новости. (12+)

**Юнкун, майăн 6-мĕшĕ**

6.10-6.30, 7.10-8.00 Ирхи кăмăл. (12+) 6.30-7.00, 22.30-23.00 Республика сасси. (12+) 8.10-8.30, 10.10-10.30, 11.10-11.30, 14.10-14.30,15.10-15.30, 16.10-16.30, 18.10-18.30, 20.10-20.30, 21.10-21.30, 22.10-22.30, 23.10-23.30 Юрă вăчăри. (12+) 8.30 Социальный вопрос. (12+) 9.10-10.00 Женская среда. (12+) 10.30-11.00 Тăван ăс-хакăл. (12+) 11.30-12.00 Çĕр сум. (12+) 12.05-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 12.30-13.00 Наша республика. Главная тема.(12+) 14.30-15.00 Социальный вопрос. (12+) 15.30 Перекресток. (12+) 16.30-17.00, 23.30-24.00 Экстренный час. (16+) 17.10-18.00 Литература çӳпçинчен. (12+) 18.30-19.00 Ялтан яла. (12+) 19.10-19.30 Тема дня. (12+) 19.30-20.00 Тĕплĕ калаçу. (12+) 20.30-21.00 Читаем о Великой Отечественной войне. (12+) 21.10-22.00 Çиларман-шоу. (12+)
**Çĕнĕ юрă** 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

**Кĕçнерникун, майăн 7-мĕшĕ**

6.10-6.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 7.30-8.00 Ялтан яла. (12+) 7.10-7.30, 6.30-7.00, 8.10-8.30, 9.10-9.30, 10.10-10.30, 14.10-14.30, 17.10-17.30, 20.10-20.30, 22.10-22.30, 23.10-23.30 Юрă вăчăри. (12+) 6.30-7.00 Тема дня. (12+) 8.30-9.00, 22.30-23.00 Республика сасси. (12+) 9.30-10.00 Тĕплĕ калаçу. (12+)10.30-11.00 Социальный вопрос. (12+) 11.10-12.00 Чĕнтĕрлĕ чаршав. (12+) 12.05-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.30-15.00 Азы Православия. (12+) 15.10-16.00 Путешествие в историю чуваш. (12+) 15.30-16.00 Наша республика. Главная тема. (12+) 16.10-16.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 16.30-17.00, 23.30-24.00 Экстренный час. (16+) 17.30-18.00 Ачалăх урхамахĕ. (6+) 18.10-19.00 Вăрçă ахрăмĕ. (12+) 19.10-19.30 Тема дня. (12+) 19.30-20.00 Артистсем Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи çинчен вулаççĕ. (12+) 20.30-22.00 Çичĕ юрă. (12+)
**Çĕнĕ юрă** 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

**Эрнекун, майăн 8-мĕшĕ**

6.10-6.30, 7.10-8.00 Ирхи кăмăл. (12+) 6.30-7.00, 22.30-23.00 Республика сасси. (12+) 8.10-8.30, 10.10-10.30, 11.10-11.30, 14.10-14.30,15.10-15.30, 16.10-16.30, 18.10-18.30, 20.10-20.30, 21.10-21.30, 22.10-22.30, 23.10-23.30 Юрă вăчăри. (12+) 8.30 Тема дня. (12+) 9.10-10.00 Неформат. (12+) 10.30-11.00 Вăрçă ахрăмĕ. (12+) 11.30-12.00 Çĕр сум. (12+) 12.05-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.10-15.00 Асăмри юрăсем. (12+) 15.10 Пачăшкă сăмахĕ. (12+) 16.30-17.00 Социальный вопрос. (12+) 17.30-18.00 Наша республика. Главная тема.(12+) 18.30-19.00 Ялтан яла. (12+) 19.10-19.30 Тема дня. (12+) 19.30-20.00 Артистсем Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи çинчен вулаççĕ. (12+) 20.10-24.00 Каçхи микс. (12+)
**Çĕнĕ юрă** 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

**Шăматкун, майăн 9-мĕшĕ**

6.30-7.00 Чĕрере çуралнă сăвăсем. (12+) 7.30-8.00 Вăрçă ахрăмĕ. (12+) 9.10-9.30, 10.10-10.30, 11.10-11.30, 15.10-15.30, 16.10-16.30, 18.10-18.30, 19.10-19.30 Юрă вăчăри. (Çĕнтерӳ юррисем) (12+) 8.30-9.00 Присягая Родине. (12+) 9.30-10.00 Васильки. (12+) 10.30-11.00 Чĕрере çуралнă сăвăсем. (вăрçă поэчĕсем) (12+) 12.10-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.05-15.00 Радиотеатр. (12+) 15.30-16.00 Вăрçă ахрăмĕ. (12+) 16.30-17.00 Нам 41-й не забыть, нам 45-й славить. (12+) 17.30-18.00 Шурăмпуç. (12+) 18.10-19.30 Аслă Çĕнтерӳ тунăранпа 70 çул çитнине халалланă ятăрлă репортаж. (12+) 18.55-19.00 Минута молчания. (12+) 19.30-20.00 Читаем о Великой Отечественной войне. (12+) 20.05 -24.00 Каçхи микс. (12+)
**Çĕнĕ юрă** 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

**Вырсарникун, майăн 10-мĕшĕ**

6.05-6.30, 9.05-9.30, 15.05-15.30 Юрă вăчăри. (12+) 6.30-7.00 Пултарулăх çулĕпе. (12+) 7.05-8.30 Аслă Çĕнтерӳ тунăранпа 70 çул çитнине халалланă ятăрлă репортаж. (12+) 11.05-11.30, 16.10-16.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 8.30-9.00 Ялтан яла. (12+) 9.30-10.00 Шурăмпуç. (12+) 10.05-11.00 Çичĕ юрă. (12+) 11.30-12.00 Çамрăк хунав. (12+) 12.05-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.05-15.00 Радиотеатр.(12+) 15.30-16.00 Варçă ахрăмĕ. (12+) 16.30-17.00 Çĕр сум. (12+) 17.10-18.00 Çиларман-шоу. (12+) 18.30-19.00 Ялтан яла. (12+) 19.05-20.00 Янра юрă! (хит-парад) (12+) 20.05-24.00 Каçхи микс. (12+)
**Çĕнĕ юрă** 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

